27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
8
ШАМАТКУН
70(6565) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем çаплах СКАЛА хулинчен хĕвеланăçнерехри районра тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, нимĕçсен обронин тĕреклатнĕ пункчĕсене чылайĕшне туртса илнĕ, вăл шутра — СКАЛА, БОРЩОВ, МЕЛЬНИЦА-ПОДОЛЬСКАЯ, ЦЫГАНЫ. Çавăн чухне пирĕн çарсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—6, аэродром çинче пулнă транспорт самолечĕсем—29, истребительсем — 4, автомашинăсем — 600 тата ытти çар пурлăхĕ те. Çав вăхăтрах ТАРНОПОЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн йышлă пехотипе танкĕсен атакисене сирсе-сирсе янă, кунта тăшман хăйĕн ТАРНОПОЛЬ хулинче çавăрса илнĕ группировкине пулăшма хĕсĕнсе кĕрсе кайма тăрăшнă. Хаяр çапăçусенче тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшпе пысăк çухатусем кӳнĕ.

КИШИНЕВ хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ.

ОДЕССА енче пирĕн çарсем наступление вăйлатса пынă, Одесса облаçĕнчи ГРОСУЛОВО район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — МЕЩАНКА, НОВО-ПЕТРОВКА, ПОПЛАВСКОЕ, КАРМАНОВО, МАРЬЯНОВКА, КОНСТАНТИНОВКА, НОВО-ВАНДАЛИНКА, БЛАГОЕВО, АЛЕКСАНДРОВКА, ПАВЛИНКА, НОВАЯ КУБАНКА, БЛАГОДАТНОЕ, СВЕРДЛОВО (ОДЕССĂРАН 22 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре) ятлă пысăк ялсем тата КАРПОВО ятлă чугун çул станцийĕ (РАЗДЕЛЬНАЯ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре).

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 84 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 44 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем Скала хулинчен хĕвеланăçнерехри районра çавăрса илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсене хĕвелтухăç енчен пырса çапнă та Скала, Борщов, Мельница-Подольская, Цыганы ятлă тĕреклетнĕ пунктсенчен тата ытти чылай ялсенчен сирпĕтсе кăларнă. Тăшмана йывăр çухатусем кӳнĕ. Пĕр Иванков тата Мушкатовка ялĕсен районĕнче кăна 1000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Каялла чакакан нимĕçсем темиçе вунă танк, бронетранспортер тата автомашинăсем нумай сирпĕнтерсе е çунтарса янă.

Нимĕçсен пысăк вăйĕсем, çавăрса илнĕ ункăран хĕвеланăç еннелле татса тухасшăн пулса, кунĕн-çĕрĕн контратакăсем тунă. Совет артиллеристчĕсем, танкисчĕсем тата пехотинецĕсем гитлеровецсене тăвăллă вут-çулăмпа çунтарнă, тăшман ретĕсене хăвшатса пынă. Пирĕн пĕр соединени чаçĕсем, тăшман контратакисене сире-сире ярса, нимĕçсен пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Совет летчикĕсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировки тăракан районра сывлăшран хупăрласа тăнă, кун-каçиччен пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 19 самолетне персе ӳкернĕ. Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсем каласа кăтартнă тăрăх, нимĕçсен аслă офицерĕсем çавăрса илнĕ районран транспорт самолечĕсем çине ларса тараççĕ.

Тарнополь хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман танкĕсемпе пехотин йышлă вăйĕсем, хăйсен Тарнопольте çавăрса илнĕ группировкине пулăшма хĕсĕнсе кĕрсе каясшăн пулса, темиçе хутчен те хаяр атакăсем тунă. Пирĕн çарсем гитлеровецсен атакисене пурне те сирсе янă, танксем нумай пĕтерсе тăкнă, тăшмана çынсем тĕлĕшпе пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Кишинев хули енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ. Совет чаçĕсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вăл шутра—75 тупă, 120 пулемет, 46 понтон, 30 радиостанци тата 500 автомашина ытла. Çав вăхăт хушшинчех тăшманăн 2000 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ.

* * *

Одесса енче пирĕн çарсем çаплах хăвăрт наступлени туса пынă. Пĕр соединени боецĕсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Одесса облаçĕнчи Гросулово район центрне штурмласа тытса илнĕ. Пирĕн танкистсем танксемпе тупăсем турттарса пыракан икĕ чугун çул эшелонне тытса илнĕ. Раздельная хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Çав тĕреклетнĕ паха пункта каялла туртса илесшĕн пулса, нимĕçсем хăйсен йышлă вăйĕсемпе контратака пуçласа янă. Пирĕн çарсем тăшманăн çав вăйĕсене флангран пырса çапнă. Нимĕçсен васкасах каялла чакмалла пулнă. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă. Пирĕн ытти чаçсем, çумăрсем хыççăн пăсăлса кайнă çулсемпе Большой Куяльник шывĕ хĕррипе вирлĕн малалла куçса пырса, гитлеровецсен пĕр батальонне аркатса тăкнă. Пĕр гвардейски соединени чаçĕсем 20 километр малалла куçнă, 600 нимĕçе ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 17 тупă, 36 пулемет, 40 автомашина, 250 лав тата тĕрлĕрен çар япалисем нумай тытса илнĕ.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ мартăн 12-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче нимĕçсен 18 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 9 паровоз, çарсемпе вăрçă хатĕрĕсем турттарса пыракан 47 вагон, 18 цистерна бензин тата тупăсемпе автомашинăсем тиенĕ 35 платформа çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Партизансем 2.000 рельса ытла тата 7 кĕпере сирпĕнтерсе янă, 43 километр тăршшĕ телеграфпа телефон çыхăнăвĕн линине таттса пĕтернĕ. Çав вăхăт хушшинчех Калинин облаçĕнчи партизансем нимĕçсен гарнизонĕсемпе полици участокĕсене чылайĕшне аркатса тăкнă.

* * *

Фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Ровно облаçĕнчи Острожецки районри Малин ялĕпе колонине тĕппипех пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсен калама çук усал ĕçĕсене йĕрлесе тухса, комисси акт çырнă. Актра çапла каланă: «Ирхине ирех нимĕçсем Малин ялĕпе колонине хупăрласа илнĕ те пĕтĕм халăха площаде хăваласа кăларнă. Унтан гитлеровецсем арçынсене шкулпа чиркĕве хупса питĕрсе лартнă, хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене сарайсене питĕрсе лартнă. Çын юнне ĕçекен фашистсем шкулпа чиркĕвĕн йывăç çурчĕсем тавра тата сарайсем тавра улăм купаланă та краççын сапса вут тĕртсе янă. Алăксемпе чӳречесем умĕнче нимĕç хуралçисем тăнă. Сиксе тухса çăлăнма хăтланнă совет çыннисене çав хуралçăсем кашнинех автоматпа персе вĕлернĕ. Гитлер ирсĕрĕсем çав кун 603 совет гражданне вĕлернĕ е çунтарса янă, вăл шутран 205-шĕ пĕчĕк ачасем пулнă. Фашистсен бандичĕсем 355 пурăнмалли çуртпа тĕрлĕ хуралта çунтарса янă.

Акт çине çаксем алă пуснă: медицина службин гварди подполковникĕ Лизунков, гварди майорĕ Тихонов, юстицин гварди капитанĕ Русов, Малин ялĕнчи çынсем—А. Гора, П. Казмирук тата ыттисем те.

Сăръелĕнчи вулас çуртĕнче

ЕЛЧĔК. Сăрьел вулав çуртĕ районта чи лайăх ĕçĕсемпе палăрса тăрать. Ахальтен мар ĕнтĕ ялти çынсем ăна «Юратнă культура çуртĕ» теççĕ. Вулав çуртĕ ялти ĕççыннисемпе таччăн çыхăнса ĕçлет, мĕн пур политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пырать.

Вулав çуртĕн пуян библиотека пур. Унта вырăс, тутар, чăваш чĕлхипе çырнă 2.000 кĕнеке ытла. Кун сăр пуçне тата тĕрлĕрен хаçат-журналсем килсе тăраççĕ. Çавăнпа кунта вулакансен йышĕ те ӳссех пырать, вăл халĕ 165 çынна çитнĕ ĕнтĕ. Каçхине кунсенче е ĕçпе вăхăтсем пулсан, колхозниксемпе колхозницăсем тата ялти çамрăксем ланах çак çурта пырса тăраççĕ. Вĕсем унта хаçат-журналсем вулаççĕ, доминолла, шашка-шахмăтла выляççĕ, докладсемпе лекцисем тата радио итлеççĕ. Вăхăта савăнăçлăн ирттерме кунта хуткупăс тата ытти музыка инструменчĕсем те пур.

Вулав çуртĕ çумĕнче 6 тĕрлĕ кружок ĕçлет. Кружоксен занятийĕсем план тăрăх пулса иртеççĕ. Агротехникăна вĕренмелли кружока 41 çын çӳрет. Унта сеялкăсемпе, плугсемпе ĕçлеме, выранти удобренисемпе усă курма, вăрлăхсене яровизацилеме тата ытти ĕçсене те вĕренеççĕ. Халиччен 7 занятие ирттернĕ. Çавăн пекех драмкружок та лайăх ĕçлет. Унта 27 çын членра тăрать. Кăçал вĕсем ялта 7 хутчен спектакль лартса панă. Хор кружокĕ виçĕ хутчен çĕнĕ юрăсен концертне ирттернĕ. Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренмелли тата музыка ĕçне вĕренмелли кружоксем те начар мар ĕçлеççĕ.

Вулав çуртĕпе колхоз çумĕнче стена хаçачĕсем, бригадăсенче боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Кăçал бригадăсенче 48 номер, колхозра вулав çурчĕсенче 5 номер стена хаçачĕсем кăларнă.

Вулав çуртĕнче плакатсемпе лозунгсем, çулпуçсен портречĕсем илем кӳрсе тăраççĕ. Унтах «Окно ТАСС» тата «Отечественнăй вăрçă геройĕсем» ятлă кĕтессем организациленĕ.

Вулав çуртĕ çумĕнче агитколлектив пур. Вăл ялта политикăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пырать. Ку ĕçе пуринчен ытларах ялти интеллигенци явăçтарнă. Ялсоветĕпе колхоз та вулав çуртне ĕçлĕн пулăшса пыраççĕ.

Вулав çуртĕн заведующийĕ пулса Отечественнăй вăрçă инваличĕ З. Сабирзянов юлташ ĕçлет. Ăна лайăх ĕçленĕшĕн ПК ВЛКСМ-ăн Хисеплĕ грамотине парса награднăлана.

И. ПЕТРОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Пысăк награда хавхалантарать

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Ямашри «Ударник» колхозăн кăçал çурхи культурăсем 356,8 гектар акса хăвармалла. Вăрлăхсем çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ, тасатса кирлĕ пек кондицие лартнă. Пăрса йышши культурăсене пĕтĕмпех алăпа сортланă. Вăрлăхсене виçĕ кунта пĕрре тĕрĕслесе тăраççĕ.

Колхозăн 24 плуг, 2 культиватор, 30 сӳре тата пĕр сеялка пур. Вĕсене пахалăхлă юсанă. Сеялкăсене тата ытти ялхуçалăх машинисене уйрăм колхозниксене çирĕплетсе панă. Колхоз çуракине ирттерме ĕç планĕ туса хатĕрленĕ. Çав план тăрăх, çурхи тырăсене 8 кун хушшинче акса пĕтерме палăртнă.

Удобренисем çителĕклĕ чухлех пухнă. Халь колхоз ыраш калчисене апатлантарма хатĕрленет. Çак ĕçе валли кирлĕ пулакан пичкесемпе каткасем хатĕр.

Уйăхлăх вăхăтĕнче кăна колхозра 60 центнер фекали, 72 центнер кĕл, 50 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç. Вырăнти удобренисене уя кăлармалли уйăхлăхра 3000 лав ытла тислĕк тăкнăччĕ.

Кунта лашасене тимлĕн пăхаççĕ. Пурĕ 80 ĕç лаши. Вĕсенчен çуракине тухма юрăхсăррисем пачах çук. Старши конюх Григорьев юлташ конюхсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăрать. Конюхсем лаша апачĕсене тирпейлĕ тыткалаççĕ, пĕлсе усă кураççĕ. Çавăнпа та выльăх апачĕ çая кайса пĕтмест, выльăхсем тутă та самăр.

Вăкăрсене ĕçе вĕрентес тĕлĕшпе те колхоз аван ĕçлет. Халĕ икĕ вăкăра кӳлсе çӳреме вĕрентрĕç.

Çуракине хатĕрленсе çитмелли уйăхлăх вăхăтĕнче çĕнĕрен 80 михĕ, 45 хăмăт, 50 ĕнерчĕк, ака пăявĕсем çителĕклĕ таран туса хатĕрлерĕç.

Республикăна иртнĕ çул тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш преми памалла туни Ямаш колхозникĕсене татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

„Самолет" колхоз çуракине хатĕр

ИШЛЕИ. Пĕрремĕш Алик ялсоветĕнчи «Самолет» колхоз çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитрĕ. Кирлĕ таран вăрлăх хывса тасатнă. Ялхуçалăх машинисене юсаса, туртăсемпе пăявсене çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

Кĕр калчине апатлама 25 центнер кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Уя 705 лав тислĕк, 107 тонна торф кăларнă.

Лашасене кӳлме чарса, канма тăратнă. Колхозсен аслă пухăвĕнче кăçалхи çураки планĕпе ĕç планне сӳтсе-явса çирĕплетнĕ. Кашни колхозник хăй çуракинче ăçта, мĕнле ĕçре ĕçлессине пĕлсе тăрать. Колхозниксем пĕрчĕллĕ тырăсене 8 кунта акса пĕтерме йышăнчĕç.

Н. АМУРЦЕВ.
«Самолет» колхоз председателĕ.

„Культура" колхозăн çураки планĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Вăрманкасси́нчи «Культура» колхоз çуракине ирттерме план туса хатĕрлерĕ. План тăрăх, пур ĕçсене те звеносемпе туса пымалла. Кашни бригадăна тăватпăр звенона уйăрнă, вĕсенче, 13-шер колхозник. Уйхир ĕçĕнчи звеносемсĕр пуçне, колхозри тĕрлĕ ĕçсене туса та звеносем уйăрнă. Сăмахран, хăмла çитĕнтерсе пухса илме 20 çынтан, пахчаçимĕç ĕçĕнче ĕçлеме 10 çынтан звеносем тунă.

Лашасемпе ĕç хатĕрĕсене звеносем çумне çирĕплетсе хунă. Çĕр участокĕсене те звеносене çирĕплетсе панă.

Колхозăн акмалли çĕр лаптăкĕ пурĕ 185 гектар шутланать, ăна 10 кун хушшинче акса хăварма пăхнă. Акана хутшăнакан 42 колхозник валли столовăй пулмалла. Ун валли çителĕклĕх çăнăх, кĕрпе, аш-какай, сĕрулми хатĕрлесе хунă.

И. АНДРЕЕВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-СЕМ 1944 ÇУЛХИ АПРЕЛĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

МТС-сем	Пурĕ юсанă (процентпа)	Март уйăхĕнчи плана тултарнă (процентпа)
Красноармейски	100,0	—
Комсомольски	100,0	—
Шăхасан	100,0	—
Йĕпреç	100,0	—
Елчĕк	101,6	—
Ишлей	100,0	—
Шупашкар	100,0	—
Куславкка	100,0	—
Сĕнтĕрвăрри	100,0	200,0
Вăрнар	100,0	—
Элĕк	100,0	—
Хĕрлĕ Чутай	100,0	—
Первомайски	100,0	—
Сĕнтĕр	100,0	—
Вăрмар	100,0	—
Чкаловски	100,0	—
Çĕмĕрле	100,0	—
Шăмăршă	97,0	—
Етĕрне	94,8	—
Çĕрпӳ	93,2	—
Канаш	91,3	—
Кувакшс	87,2	—
Тăвай	85,7	—
Улатăр	74,1	85,7
Пăрачкав	62,7	—
Пĕтĕмпе	93,1	10,3
Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă	92,5	—

Лашасем юсанчĕç

ЙĔПРЕÇ. «Красный металлист» колхозăн 15 лаши ытла та начарланнăччĕ. Çав лашасене колхозниксем уйрăммăн пăхма тытăнчĕç. Апла витесенче усранă май тата апата яланах вĕри шывпа пăтратса çитернĕ май, лашасем чылайĕшĕ юсанчĕç. Лашасен апачĕ начарланассинчен кура, колхозниксем хăйсен запасĕсенчен 65 пăт ытла утă пухса пачĕç. И. Арсентьев юлташ 5 пăт пачĕ, Ф. Воронов, А. Павлов, Петров юлташсем тата ытти колхозниксем те колхоза утă кивçен пачĕç.

—Лашасене пурне те çураки ĕçĕнче ĕçлеме юрăхлă тăватпăрах,—теççĕ колхозниксем.

П. КУРАКОВ.

Тăватă çул выртнă силос

ВĂРНАР. Мамалайти Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз виçĕ çул каярах хывнă икĕ силос шăтăкне уçрĕ. Вăл силоса вĕсем 1940 çулта хĕвелçаврăнăш тунинчен, купăста çулçинчен тата ытти апăртапăр курăкран хывнă пулнă.

Силосĕ лайăх упраннă. Çав силоса халĕ колхоз ĕне-выльăхсене, сыснасене, пачар лашасене çитерет. Выльăхсем ăна питĕ юратса çиеççĕ. Ăна çисе, халĕ пачар ĕнесемех юсанчĕç, сăвакан ĕнесем сĕт хушрĕç.

Колхозăн иртнĕ çулсенче хывни тата 4 шăтăк силос пур. Вăл выльăхсене курăк тухиччен çитерме çитет.

СЕМЬЯНОВ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Ăмăрту сарăлсах пырать

ЕТĔРНЕ, апрелĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Спирт тăвакан заводри рабочисемпе работницăсем, Мускаври станоксем тăвакан Ленин орденлĕ «Красный Пролетарий» завод коллективĕ Совет Союзĕнчи промышленноçпа транспорт работникĕсене чĕнсе каланине сӳтсе-явса, хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илчĕç. Вĕсем иккĕмĕш кварталта продукци туса кăларассине 10 процент ӳстерме, подсобнăй хуçалăхра çураки ĕçĕсене вунă кун хушшинче вĕçлеме пулчĕç.

Халĕ заводра май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Гавриков, Ярандайкин, Иванова, Блинова юлташсем кулленех задание 150—200 процент таран пурнăçлаççĕ.

С. ЛАДУР,
Завод директорĕ.

Задание ирттерсе тултараççĕ

УЛАТĂР, апрелĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Паровозсем юсакан завод коллективĕ апрель уйăхĕнчи заданине пилĕк кун малтан пурнăçлама пулчĕ. Шăрататакан тата тимĕрçĕ цехĕсем 5 кун хушшинче уйăхри задание 30 процента яхăн пурнăçларĕç. Обеткин, Литвиненко, Кабаевский стахановецсем кулленхи ĕç нормине тăтăшах икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Заводра комсомолецсемпе çамрăксен 22 фронтовой бригадине организациленĕ. Вĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах З. Легостина юлташ ертсе пыракан фронтовой бригада кăтартуллăн ĕçлет.

Рабочисемпе работницăсем май уявне ĕçри чаплă çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Фронтпа çĕршывăн пур заказĕсене те вăхăтра пурнăçлассишĕн ăмăртăва анлăн сарса ячĕç.

Л. ШЕРСТЮК,
Партбюро секретарĕ.

Уйахри задание 10 кун малтан пурнăçлама пулчĕç

ВĂРМАР. Апат-çимĕç комбиначĕ (директорĕ Михайлов юлташ) март уйăхĕнчи производство планне 20 кун хушшинче пурнăçланă. Сăра, варени тăвакан цехсем уйăхри задание 150 процента çити тултарнă.

Комбинатра мĕн пурĕ 60 çын ĕçлет. Çав шутран 40 проценчĕ стахановецсемпе ударниксем пулса тăраççĕ. М. Павлова, А. Николаева, А. Яковлева стахановкăсем кулленех ĕç нормине икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Юлашки вăхăтра сироп тăвакан цех коллективĕ те ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерчĕ. И. Сичкина, Т. Иванова, М. Петрова юлташсем заданине тăтăшах 130—150 процент чухлĕ пурнăçласа пыраççĕ.

Комбинатра ĕçлекенсем, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, апрель уйăхĕнчи задание срокчен 10 кун малтан пурнăçлама обязательство илнĕ. Илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн кунта халь социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Торф кăларнă çĕрте ĕçлекен хĕрарăмсен паха пуçарăвĕ

Кăçал Атăл леш енчи торф предприятине чылаях пысăклатмалла. Çакна май сезона хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем те пысăкланаççĕ. Рабочисем валли çĕнĕрен 6 барак, столовăй, мунча, клуб тумалла. Кунта платниксемпе техниксем тата ытти нумай тĕрлĕ профессисемпе ĕçлекенсем кирлĕ пулаççĕ.

Строительствăри прораб Кузьмин юлташ пуçарнипе Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ районĕсенчи колхозсенчен ынна хĕрарăмсем 20 çын платник ĕçне, 6 çын кăмакасем тума вĕренме тытăнчĕç. Нумайĕшĕсем платник ĕçне ăнăçлăн вĕренеççĕ. Çапла, А. Кольцова, А. Акимова, М. Мурашкина, М. Тимофеева, В. Титова юлташсем йывăçран койкăсем тума тытăнчĕç.

В. Л.

Совет Союзĕ тăрăх

Ӳкерчĕк çинче: Социализмлă Ĕç Геройĕ, Сталинла премии лауреачĕ—инженерипе авиаци службин генерал-майорĕ **А. Г. Костиков.**

А. ГРИГОРЬЕВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

СОВЕТ АВТОМАШИНИСЕН ÇĔНĔ МОДЕЛĔСЕМ

Горькири Молотов ячĕпе тăракан завод «Газ-51» тата «Газ-63» автомашинăсен çĕнĕ моделĕсене туса хатĕрленĕ. Çак çĕнĕ йышши машинăсене вăрçă хыççăн ялхуçалăхĕнче усă курма шутласа тунă.

«Газ-51» машинăн моделĕ ахаль грузовик пекех, вăл 2—2,5 тонна туртать. «Газ-63» машинăн моделĕ—начар çулпа та çӳреме пултаракан грузовик. (ТАСС).

ДОНБАСРИ ГОРНЯКСЕН ÇУРЧĔСЕНЕ ЮСАСА ПУРĂНМА ЮРАХЛĂ ТĂВАÇÇĔ

Донбасра горнякасен нимĕç оккупанчĕсем ишĕлтернĕ суртйĕрĕсене тата культурăпа йăла учрежденийĕсене юсаса йĕркелеççĕ. «Сталинуголь», «Ворошиловградуголь» тата «Ростовуголь» рабочи поселокĕсенче пурăнмалли çуртйĕрсене 560 пин тăваткăл метр чухлĕ юсаса, унта горнякасене вырнаçтарнă.

Горняксен поселокĕсенче столовăйсем, клубсем, ача сачĕсемпе яслисем уçнă. Кăçал Донбасра пурăнмалли хваттерсене пĕр миллион тăваткăл метр чухлĕ юсаса пурăнма юрăхлă туса хураççĕ.

УЗБЕКИСТАНРИ КОЛХОЗНИКСЕМ УКРАИНĂРИ КОЛХОЗСЕНЕ ТĂВАНЛА ПУЛĂШАÇÇĔ

Украинăн ирĕке кăларнă районĕсене тăванла пулăшма Узбекистанран колхозниксем уйăрса панă лашасен пĕрремĕш эшелонне янă. Çитес кунсенче Украинăна Андижанпа Ташкент облаçĕсенчен 2.000 сурăх тата шултăра мăйракаллă выльăх 300 пуç яраççĕ.

Ирĕке кăларнă районсенче выльăхсен шутне ӳстермешкĕн Узбекистанри колхозсем 200.000 сурăхпа качака тата 9.000 пуç шултăра мăйракаллă выльăх уйăрса хунă. (ТАСС).

БЕЛОРУССИН ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНĔСЕНЕ КУЧЧЕНЕÇСЕМ ЯНĂ

Белоруссин ирĕке кăларнă районĕсене Ярославль облаçĕнчен пĕрремĕш эшелон кучченеçсем янă. Ярославль облаçĕнчи ĕççыннисем станоксем, электромоторсем, инструментсем, материалсем, килте кирлĕ япаласем, столовăйсемпе ача сачĕсем тата больницăсем валли оборудовани, шкулсем валли вĕренӳ пособийĕсем нумай янă. Çитес кунсенче вăрлăхсемпе ялхуçалăх инвентарĕ тиенĕ иккĕмĕш эшелон яраççĕ. (ТАСС).

ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ ÇĔНĔ ФИЛЬМ

Кинематографи ĕçĕсен комитетĕнче «Март—апрель» ятлă çĕнĕ фильма пăхса тухнă. Ăна В. Кожевниковăн çав ятлă калавĕ тăрăх тунă.

Çав фильмра тăшман тылĕнче кĕрешекен парашютистсен паттăр ĕçĕсене кăтарнă. Çывăх кунсенче вăл фильма киносене кăтартма пуçлаççĕ. (ТАСС).

СПОРТ СЕЗОНĔ ПУÇЛАННĂ

Абхазире çуркуннехи спорт сезонĕ пуçланнă. Сухумие вĕренӳпе тренировка сборне пирĕн çĕршыври чи лайăх легкоатлетсемпе футболистсем пуханнă. «Динамо» стадионĕнче легкоатлетсен пĕрремĕш ăмăртăвĕ тата футбол вăййи пулса иртнĕ. (ТАСС).

Хулана тасатасси мĕнле пырать

Шупашкар хулине тасамарлăхсемпе çӳп-çапсенчен тасатас ĕç вăйланса пырать. Кашни кунах урамсене, суртсен картишĕсене тасатаççĕ. Юлашки икĕ кун хушшинче халăх çӳрекен 25 вырăна тасатнă. Карл Маркс, Ворошилов, Урицкий урамĕсене тата ыттисене те чылайĕшне ыран-паян тасатса пĕтереççĕ.

Анчах пур предприятисемпе учрежденисем те ку ĕçе кирлĕ пек тытăнман-ха. Сăмахран, промкомбинатпа 1-мĕш номерлĕ типографи хăйсен килкартишне халĕ те тасатма тытăнман.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

С Т А Л И Н юлташа

Хаклă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр, Иосиф Виссарионович!

Эпир, Шупашкар хули çар комиссариачĕн вĕренӳ пунктĕнчи боецсемпе командирсем, Сире, аслă полководеца, фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе тăвакан историллĕ çĕнтерӳсен организаторне, боевой салам яратпăр.

Халĕ, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳллĕн наступлени туса пырса, Германи фашизмне тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкас сехете çывхартса пынă вăхăтра, всевобучăн 6-мĕш черетри боецĕсемпе командирĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне Хĕрлĕ Çара лайăх хатĕрленнĕ боецсем хушса паассишĕн кĕрешнĕ çĕре параççĕ.

Ĕпхӳри паровозсем юсакан заводри вĕренӳ пункчĕн боецĕсемпе командирĕсен, «Всевобуч боецĕ» ятлă штурмовиксен эскадрильине тума укçа-тенкĕ пухассипе пуçарнăскерсен примерĕпе эпир çав фонда 23.000 тенкĕ пухса кывраммăр.

Всевобуч боецĕсемпе командирĕсен укçа-тенкипе тунă самолетсем, мухтавлă сталинла соколсем тытса пыракан самолетсем, пирĕн таса совет çĕрĕ çине кĕме хăйнă ирсĕр нимĕç захватчикĕсене аркатаркаттă тăкчăр.

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Пирĕн тăван Иосиф Виссарионович, Эсир ĕççыннисен телейĕшĕн, хамăр Тăван çĕршыв тăшманĕсене хăратса тăма нумай-нумай çул пурăнăр!

Шупашкар хули военкомачĕн всевобуч центрĕн начальникĕ
М. САНАЧИН.

Вĕренӳ пункчĕн начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ
Г. КРУПСКИЙ.

Вĕренӳ пункчĕсенчи боецсем:
СТУРИКОВ, ТОРЧИНСКИЙ, КАЦ, АСАФЬЕВ, СКИНДЕР.

Шупашкар хули военкомачĕн всевобуч вĕренӳ центрĕн начальникне САНАЧИН юлташа

Начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместительне КРУПСКИЙ юлташа

Вĕренӳ пунктĕнчи боецсене СТУРИКОВ, ТОРЧИНСКИЙ, КАЦ, АСАФЬЕВ, СКИНДЕР юлташсене

Всевобучăн Шупашкар хули военкомачĕн вĕренӳ пункчĕсенчи боецсемпе командирсене, «Всевобуч боецĕ» ятлă самолетсен-штурмовиксен эскадрильине тума 23.000 тенкĕ укçа пухнăскерсене, манран боевой салам калăр тата Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен пĕлтерĕр.

И. СТАЛИН.

Елчĕк районĕнчи „Осоавиахим" колхоз çуракине хатĕр

Хĕрӳллĕ кунсем

Патрекелсем çак вăхăтра яланах тимлĕн ĕçлеме хăнăхнă. Вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе кунта 60 çулхи Мартын Афанасьевичран пуçласа Б. Гаврилов пионер таранах тăрăшса ĕçлессĕ. Пурте хĕрӳ ĕçре. Пурин те пĕр ĕмĕт — çĕршывпа фронта тырпул, пахча-çимĕç ытларах та ытларах туса парасси.

Мартын Афанасьевич Плотников, хăй ваталăхне пăхмасăрах, колхоз ĕçĕнче ырми-канми ĕçлет. Вăл 3-мĕш бригадăн завхозĕ. Бригада валли çураки вăхăтĕнче кирлĕ сӳсменсене, йĕнерчĕксене тата ут таврашĕсемпе вĕрен-пăявсене ытлашшипех хатĕрлесе хунă.

— Пирĕн бригада паянах çуракине тухма хатĕр, — тет вăл, шурă сухалне якатса.

Колхозăн лашасем çителĕклĕ. 62 ĕç лаши. Вĕсем пурте вăтам самăр. Анчах кунта çураки вăхăтĕнче тата ялхуçалăх ĕçĕсенче лаша мĕнле вырăн йышăнса тăнине лайăх ăнланассĕ, вак-тĕвек ĕçе лашасене пачах кӳлмессĕ. Комсомолецсемпе шкул ачисем 13 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ колхоз организаторĕсенчен пĕри — Сергей Егорович Петров çапла калать: Н. Дозоров, И. Семенов, В. Миллин çамрăксем вăкăрсене ĕçе вĕрентес енĕпе чăнах та мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç. Фермăсене вырăн апачĕ тата вут-шанкă йăлтах вăкăрсемпе турттаратпăр. Вăкăрсемпех халь уя тислĕк те турттарассĕ,—тет Петров юлташ.

Вăйпитти арçынсем вăрçă хирĕнче хаяр тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçассĕ. Вăрçă йывăрлăхĕсене çĕнтерсе, «Осоавиахим» колхозри хĕрарăмсем, ватăсем тата çамрăксем иртнĕ çул пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Вĕсем ырашпа тулă кашни гектартан вăтам шутпа 15-шер центнер ытларах илнĕ, тĕштырăсем кашни гектартан вăтам шутпа 12,6 центнер илнĕ.

Колхозниксем пĕр тĕштырă туса илнипе кăна чарăнса тăмассĕ. Нихăçан та тырă акса туман сăрт çамкинче—Асла-Пăла шывĕн хĕрринчи усă курмасăр выртнă çĕр çиниче вĕсем çырла пахчи тунă. Çак пахчаран çĕрçырли сутса кăна колхоз 60.000 тенкĕ тупăш илнĕ. Пăла шывĕн айлăмĕнче патрекелсем нумай çул хушши ĕнтĕ пысăк тухăçлă купăста-хăяр туса илессĕ.

Колхозăн сад-пахчи пур. Иртнĕ çул унта 2.323 тĕп улмуççи лартнă.

Колхозăн кантăр акнă хирĕсем урлă тăсăлса выртакан çул çинче лаша пĕкки курăнмастчĕ. Иртнĕ çул вĕсем государствăна хăйсемшĕн кăна мар, кӳршĕри хăшпĕр колхозсемшĕн те сӳс-кантăр çĕршер пăт панă.

Ф. Доброхотов — вăрçă хирĕнчен таврăннă сын. Вăл шутласа каласма вĕреннĕ. Халĕ, вăрçăран аманса таврăннă хыççăн, счетоводра ĕçлет. Колхоз бухгалтерĕпе—Петровпа вĕсем ĕç çинчен çеç каласма вĕреннĕ.

— Кашни гектартан çĕр пăт тырă туса илесси çăмăл мар, анчах эпир ăна илетпĕрех. 475 центнер вăрлăхлăх тĕштырра тасатса хунă, шăтас пахалăхĕ аван. 25 плуг, 3 сеялка, культиватор, 60 сӳре, 58 урапа хатĕр.

Анчах пĕрремĕш бригадăра (бригадирĕ Горшкова юлташ) тĕрĕслӳ комиссийĕ 5 сӳрене йышăнман, сӳре шăлĕсене тикĕс лартман. Çавăн пекех Пчелова юлташ ертсе пыракан бригадăра та сӳресем хатĕрех мар.

Колхоз бригадирĕсем çак çитменлĕхсене пĕтерме тенĕр кунех колхоз тимĕрçне М. Каринкин юлташа тата ытти колхозниксене мобилизацилерĕç.

«Осоавиахим» колхоз членĕсем çитменлĕхсене пытарма юратмассĕ. Иртнĕ çул вĕсем кок-сагыз акнă, анчах ăна малтан йĕркеллĕ пăхайман. Кок-сагыза кантăр калчи тата ытти çумкурăксем хупласа илнĕччĕ. Кок-сагыза шкул ачисем пикенсе ĕçленипе кăна çăлса хăварнă. Вĕсем кок-сагыз хирне кĕске вăхăт хушшинчех çумкурăкĕнчен тата ытти ӳсен-тăрансенчен тасатнă.

Колхозăн производство планне тунă тата ăна пухура çирĕплетнĕ. Тĕштырăсене пĕтĕмпех яровизацилесе акма палăртнă. Яровизаци тума ятарласа хатĕрленĕ çурт пур, термометрсем çителĕклĕ, çак ĕçе тума пултаракан çынсене те уйăрса хунă.

Çураки вăхăтĕнче хирте ĕçлекенсем пĕрлешсе апатланмалла тăвассĕ. Столовăй валли 45 пăт çăнăх тата 70 пăт ытла çĕрулмипе пахча-çимĕç, аш-какай тата сĕт-çу уйăрнă.

Нумаях пулмасть колхоз çуракине тухма мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе иртерчĕç. Тĕрĕслӳре хăйсемпе ăмăртакан «Хĕрлĕ Тимеш» тата Тимирязев ячĕпе тăракан колхозсенчен те çынсем пулчĕç. Тĕрĕслӳ хăшпĕр çитменлĕхсене тупрĕ. Сăмахран, ут таврашĕсем пурĕ 113 комплект кирлĕ, комисси 83-шне кăна йышăннă, ыттисен тĕрлĕ çитменлĕхсем пулнă. Вĕсене ыран-паянах юсаса çитерессĕ.

— Кăçал эпир çуракине иртнĕ çулхинчен лайăхрах хатĕрлентĕмĕр, вăйлă тырпул туса илме пур условисем те пур, анчах кӳршĕри «Хĕрлĕ Тимеш» колхоз пачах начар хатĕрленет. Унăн 50 гектар çĕрне «Осоавиахим» колхозăн акса пулăшмалла пулать,—тет ялсовет председателĕ В. М. Скворцов юлташ.

Иртнĕ çул «Осоавиахим» колхоз государствăна тырă парса татнă хыççăн кооперациа урлă 7.165 пăт тырă сутнă. Колхозниксене ĕç кунĕсем тăрăх 3,1-шер килограмм валеçсе панă. Кăçал государствăна тата ытларах тырă, пахча-çимĕç, аш-какай парассишĕн кунти мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем хĕрӳллĕн ĕçлессĕ.

— Хĕрӳллĕ кунсем çитрĕç, кашни колхозник вăя шеллемесĕр ĕçлесен кăна пысăк тухăçлă тырпул туса илме пултаратпăр, — тессĕ колхозниксем.

В. ЯСТРЕБОВ.

Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз.

Ӳнерчĕн çинче: Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхозăн активĕ (сулахайран сылтăмалла): А. Г. КЛЕМЕНТЬЕВ—колхоз председателĕ, М. А. ПЛОТНИКОВ — бригадăри завхоз, Г. ЗОТИКОВА—колхозница, М. М. КАРИНКИН — колхоз тимĕрçи, Л. Г. ГАВРИЛОВ — садовод.

Н. Ф. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тимĕрçĕ Каринкин

Михаил Митрофанович Каринкин тимĕрçĕ пулса çирĕм икĕ çул ĕçлет ĕнтĕ. Колхоз пуçланнинчен вăл хресчен хуçалăхĕнчи япаласене юсанă, хуçалăхра кирлĕ япаласем тунă. Патрекел ялĕнче колхоз организациленĕренпех Михаил Каринкин колхозăн тимĕрçи пулса ĕçлет. Унăн ăста аллисем витĕр колхоз хуçалăхĕнчи нумай япаласем тухнă. Вăл колхозри ялхуçалăх машинисене юсанă, колхоз е колхозниксем валли тимĕр-тăмăртан япаласем тунă.

— Ĕçленĕ,—тет халĕ Каринкин юлташ,—хăйĕн ĕçĕсем çинчен сăмах пуçлансан, — ытти тимĕрçсенчен юлсах кайманшчĕ.

Вăрçăчченхи çулсенче Михаил Митрофанович нимĕнпе те палăрсах тăман. Ун чухне колхозри ĕçсене вăхăтра лайăх тума тăрăшакан тимĕрçĕсем кашни колхозра тенĕ пекех пулнă. Тен, Михаил Митрофанович ытти тимĕрçĕсенчен ăстарах, чылай чухне лайăхрах ĕçленĕ пулĕ. Анчах унăн ĕçне уйрăмăн палăртман: «тимĕрçĕ-тĕк — тимĕрçĕ ĕçне тăвать, тимĕрçĕсем халĕ нумай», тенĕ хăшпĕрисем.

Вăрçă колхозсен пурнăçне чылай йывăрлăхсем кӳчĕ. Фашистла вăрă-хурахсем пирĕн çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăнсан, совет халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхне хӳтĕлеме çĕкленчĕ. Вăрçă пуçлансанах колхозсенчи вăй-питти арçынсем алла пăшал тытса Тăван çĕршыва сыхлама тухса кайрĕç. Колхоз ĕçне пуринчен ытла хĕрарăмсемпе старыксен тата çамрăксен тума тиврĕ. Виççĕмĕш çул пырать ĕнтĕ Аслă отечественнăй вăрçă. Вăрçă вăхăтĕнчи çулсенче Михаил Митрофанович хăйĕн паттăрла ĕççпе пĕтĕм районра чапа тухнă. Тимирязев ячĕпе тăракан, «Красные Темяши», Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсенче ялхуçалăх машинисем çĕмĕрĕлсен «Михаил Митрофановича» чĕнес-тенине час-часах илтме пулать.

Чăн та, кӳршĕри колхозсенчи машинăсене виçĕ çул хушши ĕнтĕ пĕтĕмпе тенĕ пекех Михаил Митрофанович юсаса парать. Хăйсен колхозĕ тата кӳршĕри колхозсем иртнĕ çулта уйхир ĕçĕсене лайăх вĕçленинче тата халĕ вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине ăнăçлăн хатĕрленнинче унăн ĕçĕ те пур. Вăл тăван колхозĕнчи ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсанă. Унсăр пуçне Тимирязев ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсен жнейкисемпе молотилкисене юсаса панă. Каринкин юсанă машинăсем лайăх ĕçлесси пирки никам та иккĕленмест. Вăл юсанă машинăсем яланах шанчăклă, мĕншĕн тесен вăл вĕсене лайăх пахалăхна юсать.

Тимĕрçĕ ĕçĕнче нумай тĕрлĕ инструментсем кирлĕ. Михаил Митрофанович вĕсене май пур таран пурне те хăех тума тăрăшать. Инструментсем çеç мар, ялхуçалăх машинисен нумай пайĕсене те вырăнти материалсенчен тăвать.

Аслă отечественнăй вăрçă фрончĕсенче халĕ Михаил Митрофанович Каринкин тимĕрçĕ ĕçне вĕрентнĕ темиçе çын танкистсем, шоферсем пулса çапăçассĕ. Иван Каринкин, Александр Марков тата ытти юлташсем те Михаил Митрофанович патне çырусем яраççĕ, нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе пыни çинчен пĕлтерессĕ, фронта пулăшассишĕн пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлеме чĕнессĕ.

Михаил Митрофанович Каринкин Хĕрлĕ Çар воинĕсене пĕр иккĕленмесĕрех хăйĕн фронт умĕнчи тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçа кĕртни çинчен пĕлтерме пултарать. Вăл иртнĕ çулта 700 ĕçкунĕ тунă. Обществăлла ĕçсене активлăн хутшăнать. Фронтпа çĕршыва стахановла ĕçпе кăна мар, хăй перекетленĕ тырпулне, укçа-тенкине парса пулăшать. Государствăн иккĕмĕш военнăй заемне 5 пин тенкĕлĕх, укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине 3 пин тенкĕлĕх сырăнчĕ. Государствăна 75 пăт тырă сутнă.

М. ТИТОВ.

САДОВОД ГАВРИЛОВ

Хĕн-хурлă та кăнăççăр пулнă Гавриловсен пурнăçĕ. Пĕр килте тăхăр ача ӳснĕ вĕсем. Ялта шутлă çын пулман пирки, ял куштанĕсем умĕнче яланах именсе çӳремелле пулнă вĕсен. Вунă çултан иртсен, вăл ашшĕпе пĕрле ĕçе çӳреме тытăннă. Ашшĕ плотник ĕçне аван пĕлнĕ, ачи те çав ĕçе хăнăхса пынă.

1929 çулта Гаврилов хăйĕн çемьипе колхоза кĕнĕ. Унăн кĕтнĕ ĕмĕчĕ вара тинех çитнĕ. Вунăкĕ çул хушшинче колхозра тăрăшса ĕçлесе, вăл пуян та тулăх пурнăç тунă. Колхозра яланах тăрăшса ĕçленипе, вăл нумай тырпул илнĕ, хуçалăхри пур кирлĕ япаласене те туянса пынă. Пĕр сăмахпа каласан, унăн пурте çителĕклĕ пулса тăнă. Вăл пилĕк кĕтеслĕ çĕнĕ çурт лартнă, выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерсе пынă.

1941 çулччен Леонид Гаврилович колхозра рядовой колхозник пулса ĕçленĕ, çулласенче сад-пахчисенче ĕçленĕ.

Фашистла Германи пирĕн çĕршыва тапăнсан, Леонид Гаврилович ватă пулсан та, фронта тухса кайнă садовод вырăнне тăрса ĕçлеме пуçланă, кашни çул пĕччен 600—700 ĕçкунĕ тунă.

Виççĕмĕш çул ĕнтĕ вăл колхозра пахча-çимĕç бригадин садовочĕ пулса ĕçлет, сад пахчине ĕрчетессишĕн тăрăшать. Виçĕм-çул ошĕпе хăрнă панулми йывăççисем вырăнне çĕнĕрен 2.400 тĕп сыпса хăварнă, 2.323 тĕп ӳстернĕ. Иртнĕ çул колхоз çĕрçырли сутса кăна 60 пин тенкĕ тупăш илчĕ. Хăмлаçырли, хурлăхан сутса та темиçе вунă пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ. Иртнĕ çулта 0,25 гектар çине хура хурлăхан лартса хăварчĕ. Пахча-çимĕç ĕçне Леонид Гаврилович чĕререн юратса тăвать.

1943 çулта Гаврилов çемьи колхозра ĕçлесе 91 пăт тырă илчĕ. Çав шутран вăл государствăна 59 пăт сутрĕ.

Кăçал унăн 18 çулхи ывăлĕ Хĕрлĕ Çара тухса кайрĕ. Ăна Гаврилов чĕререн çапла каларĕ:

— Ывăлăм, эсĕ пурнăçра нимĕнле асап та курмарăн, çакă вăл—совет влаçĕн тивлечĕ. Çавна эсĕ яланах асра тыт, нимĕç чуптилисене хирĕç нимле хĕрхенмесĕр кĕреш,—терĕ

Ф. МАЛЫШКИН.

Çуракине тухма хатĕр

КӲКЕÇ. Самуккассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çуракине пур енчен те лайăх хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхсене сортласа хунă, 5 тонна кĕл, 9 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Хире 3.200 лав тислĕк кăларнă, 12 сӳре, 12 плуг, пĕр сеялка юсанă, 2 вăкăра, 4 тихана кӳлме вĕрентнĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçре уйрăмăнах комсомолецсем (комсомол организацин секретарĕ Владимирова юлташ) активлăн ĕçленипе палăртмалла.

«Победа» колхозри комсомолецсем те кăçал 4 вăкăра кӳлме вĕрентнĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Ют çĕршывсенче

США-ра президента суйлас умĕн

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Висконсин штатĕнче республиканецсен партийĕн нацилле съездне делегатсем суйланă. Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Нью-Йорк штачĕн губернаторĕ Дьюи, малтанлăха палăртнă тăрăх, Уилкие çĕнтернĕ. Панă сасăсен виç чĕрĕк пайне шутласа пăхса çакна палăртнă: республиканецсен партии съездне Висконсин штатĕнчен 15 çынна Дьюи майлă тăракансене, 3 çынна Макартур майлисене, 3 çынна Стассен майлисене суйланă. Уилки майлă тăракансене пĕр çынна та суйламан.

Висконсин штатĕнчи суйлавăн результачĕсем çинчен пĕлсен, Уилки США президентне республиканецсен партийĕнчен хăйне суйлама кандидата тăратмалли кампанине пĕтерсе лартни çинчен пĕлтерчĕ.

Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕ ЮНРА советне чĕнсе калани

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Ирĕкри Югослави» радиостанцийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарсен главнокомандующийĕ маршал Тито ЮНРА советĕнчен (пĕрлешӳллĕ нацисене ура çине тăма пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен администраци) çав советра югославсене вырăн пама ыйтнă.

Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕ чĕнсе калавинче çапла çырнă: халĕ Югослави территорине 50.195 тăваткăл миля оккупантсенчен тасатса ирĕке кăларнă, çав территорире 5 миллион çынна яхăн пурăнать.

Чĕнсе каланинче малалла çапла çырнă: «ЮНРА-н генеральнăй директорĕ Лимэн Каира Югославин эмиграцири правительствине канашлама кайнă текен хыпарсем Югослави халăхне питĕ пăшăрхантарчĕç».

Гитлеровецсемпе пĕрле вĕсен хӳрешкисем Югослави халăхĕ хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкма тăрăшаççĕ

Стамбула Загребран килнĕ çынсем каланă тăрăх, гитлеровецсен оккупаци командованийĕ хăйĕн тарçисемпе пĕрле партизансен юхăмне аркатса тăкма, Югослави халăхĕ хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкма тем пекех тăрăшать. Çынсене йышлăн çавăра-çавăра илсе арестлессĕ. Загребра юлашки хутĕнче çавăрса илнĕ чухне полици 7.000 çынна арестленĕ. Нумаях пулмасть Павелич, гитлеровецсем хушнă тăрăх, çар министрне Навратил генерала вырăнтан кăларнă та ун вырăнне усташасен полковникне Анте Вокича лартнă. Вокич унччен çулйĕрсен министрĕ пулса ĕçленĕ. Вăл Босни халăхне, партизансене кăмăллать пуль тесе, тискеррĕн тыткаланипе чапа тухнă. Иосиф Канич генерала Павелич çарĕн командующийĕ туса хунă. Çак Канич та Югославири патриотсене хирĕç палачла майсемпе кĕрешнипе паллă пулса тăнă.

Нимĕçсен «Данав цейтунг» ятлă фашистла хаçачĕ, Павелич «правительствине» тата Павелич çарне çĕнĕ çынсем лартни çинчен каласа, çапла çырать: çапла туни вăл оккупаци влаçĕсем «партизансен юхăмне пĕтĕмпех пĕтерсе лартмашкăн» йышăннă «татăклă мерăсен» шутне кĕрет, тет. (ТАСС).

Болгарири демократиллĕ оппозици Германипе сыхăну тытма пăрахма чĕнет

СТАМБУЛ, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çакăн пек хыпарсем илнĕ: Болгари парламенчĕн юлашки ларăвĕнче демократиллĕ оппозицин представителĕсем Стайновпа Мушанов сăмах туса каланă. Вĕсем Болгари политикине халех улăштарма ыйтнă.

Стайнов çапла каланă: Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе Гитлер Германийĕ поражени хыççăн поражени тӳсет, Германин пĕтĕм çар машинине аркатса тăкас вăхăт инçе мар ĕнтĕ. Болгарин Германипе пĕрле пĕтме кирлĕ мар. унăн Германипе сыхăну тытма халех пăрахмалла, тенĕ. Стайновпа Мушанов çакăн çинчен асăрхаттарнă: Болгари правительствин политики гитлеровецсен кулленех ӳссе пыракан требованийĕсене пурнăçласси пулса тăрать, çак политика вăл Болгарин пурнăçне начарлатса пырать, тенĕ.

Оппозици представителĕсен сăмахне ответлесе, Болгарин премьер-министрĕ Божилов çапла каланă: правительство хăйĕн политикине улăштарма шутламасть, тенĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ КЕЛЬНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбăсем пăрахакан авиацийĕн самолечĕсем Кельна тата Рур облаçĕнчи ытти объектсене те тапăннă.

БЕРЛИНПА МЮНХЕН РАЙОНĔНЧИ АЭРОДРОМСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнă пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла американецсен «Мустанг» йышши самолечĕсем Берлинпа Мюнхен районĕнчи аэродромсене тапăннă. Нимĕçсен темиçе вунă самолетне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен истребителĕсем вăйлах хирĕç тăман.

ПА-ДЕ-КАЛЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: «Либерейтор» йышши самолетсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, нимĕçсен Па-де-Кале районĕнчи çар объекчĕсене тапăннă.

ТУЛУЗА ХУЛИНЧИ САМОЛЕТСЕМ ТĂВАКАН ЗАВОДА ТАПĂННИ

Апрелĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем нимĕçсем валли самолетсем тăвакан Тулузăри завода (Кăнтăр Франци) тапăннă. (ТАСС).

ПЛОЕШТИ ХУЛИНЕ ТАПĂННИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америка бомбардировщикĕсем ĕнер, Плоешти хулине тапăнса, сортировка станцине тата нефть тасатакан предприятисене вăйлă çĕмĕрнĕ. Пырса тиннĕ бомбăсем автоцистернăсене вут тĕртсе янă. Кунсăр пуçне, нефтехранилище тата боеприпассем тăвакан завод районĕнче вăйлă взрывсем пулнă. Тăшманăн сывлăша вĕççе хăпарнă 120—150 истребителĕнчен 40 истребительне персе ӳкернĕ.

Тĕрĕсрех палăртнă тăрăх, апрелĕн 2-мĕшĕнче Штейр хулине тапăннă чухне Германин 157 истребительне персе ӳкернĕ.

СОФИЯ ХУЛИ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНĂ ХЫÇÇĂН

СТАМБУЛ, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, София хули çине мартăн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата мартăн 30-мĕшĕнче кăнтăрла çав хула çине бомбăсем унччен пăрахниччен нумай ытларах пăрахнă. Çав кунсенче пĕтĕмпе 500 самолета яхăн вĕçсе пырса тапăннă. Вут тивертекен пысăк калибрлă бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем хулара нумай япалана вăйлăн ишнĕ.

София халăхĕн чылай пысăк пайĕ хуларан тухса тарнă. Влаçсемпе полици халăхран маларах тарнă

Нимĕç салтакĕсемпе влаçĕсем йышăннă темиçе çурта, çав шутра «Болгария» ятлă гостиницăна, ишнĕ тата çунтарса янă. Çар общежитийĕсемпе штабĕсен çурчĕсем сиенленнĕ. Нимĕçсем хăйсем тăракан çуртсенчен пурлăхпа сĕтел-пукана хула сывăхĕнчи ялсене турттарса каяççĕ. Хулара электричество çутти те, шыв та, сăкăр та çук. Государство учрежденийĕсем ĕçлемессĕ. Чиновниксем тарса пĕтнĕ. Хаçатсем тухмаççĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔН МАРТ УЙĂХĔНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Америкăн Европăри сывлăш çар вăйĕсем иртнĕ март уйăхĕнче нимĕçсен çар предприятийĕсемпе Германири ытти объектсем çине 30.172 тонна бомба пăрахнă, нимĕçсен 1.081 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав операцисенче Америка авиацийĕн 369 бомбардировщик пĕтнĕ (ку вăл çав объектсене тапăнма вĕççе кайнă бомбардировщиксен 3 процентĕнчен те каярах) тата 178 истребитель пĕтнĕ (ку—тапăнава вĕççе кайнă истребительсен пĕр процентĕнчен кăшт кăна ытларах).

ШАФФГАУЗЕН ХУЛИ ÇИНЕ ĂНСĂРТРАН БОМБĂСЕМ ПĂРАХНĂ ПИРКИ ХЭЛЛ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 1-мĕшĕнче Америка самолечĕсем Швейцарири Шаффгаузен хули çине ăнсăртран бомбăсем пăрахнă. Çавăн пирки США-н государственнăй секретарĕ Хэлл ӳкĕнсе хĕрхенни çинчен пĕлтерет.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн Кассино патĕнчи тĕп фронтĕнче тата Тиррен заливĕн сыранĕнче кĕ енчен те артиллери пĕр-пĕрин çине вăйлă персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер Пишри тата Лесковацри (Югослави) сортировка станцийĕсем çине, çавăн пекех тата Италири çар объекчĕсенчен чылайăшĕ çине бомбăсем пăрахнă.

ИТАЛИ ЫЙТĂВĔСЕМ ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОНСУЛЬТАЦИ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Неапольхулинчен çапла пĕлтерет: Итали ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен консультаци совечĕ малашне хăйĕн ларăвĕсене Неаполь хулинче туса иртерет. Ун çинчен паян пр-хиве консультаци совечĕ ятарласа уйрăм пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Çапла пĕлтересси çинчен консультаци совечĕ хăйĕн паянхи ларăвĕнче йышăннă. Ларура тата консультаци совечĕ хăйĕн ĕçне мĕнле майсемпе туса пымалли çинчен йышăннă, унсăр пуçне тата çав ларурах консультаци совечĕн секретариатне тунă.

ИТАЛИ ЫЙТĂВĔСЕМ ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОНСУЛЬТАЦИ СОВЕТНĔ АНГЛИН ÇĔНĔ ПРЕДСТАВИТЕЛЬНЕ ЛАРТНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Англин Бразилире пулнă посолне Ноэль Чарльза союзниксен Вăтаçĕр тинĕс районĕнчи вăйĕсен штабĕ çумĕнчи министр-резидентне лартнă, çав вăхăтрах ăна Итали ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен консультаци советĕнче Англи представителĕ пулса ĕçлеме хушнă. Ку таранччен консультаци советĕнче Англи представителĕ пулса Макмиллан ĕçленĕ.

КЭРКА ИТАЛИ ЫЙТĂВĔСЕМ ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОНСУЛЬТАЦИ СОВЕТНЕ АМЕРИКА ПРЕДСТАВИТЕЛĔ ПУЛСА ĔÇЛЕМЕ ЛАРТНĂ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт çапла пĕлтернĕ: Рузвельт Америкăн Египетри посланникне Кэрка, посол рангĕнче тăрса, Итали ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен консультаци совечĕн членĕ пулса ĕçлеме хушнă

ИТАЛИ ЫЙТĂВĔСЕМ ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОНСУЛЬТАЦИ СОВЕТĔНЧИ ФРАНЦУЗСЕН ПРЕДСТАВИТЕЛĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Алжиртан çапла пĕлтерет: Итали ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен консультаци советĕнче ку таранччен ĕçленĕ Массигли вырăнне халĕ унта Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕн представителĕ пулса ĕçлеме Куве де Мюрвилле лартнă.

ФРАНЦУЗ ХАЛĂХНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН НАЦИ КОМИТЕЧĔН СОСТАВĔНЧЕ ПУЛНĂ УЛШĂНУСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжиртан çапла пĕлтерет: француз коммунисчĕсен партийĕн деятелĕсене Франсуа ди Бийуна тата Фернан Греньене паян официальнăй йĕркепе Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕн составне кĕртнĕ. Греньене авиаци комиссарне лартнă, Бийуна — портфельсĕр комиссар вырăнне лартнă.

Наци комитечĕн составĕнче тата урăх улшăнусем те чылай пулнă.

ДЕ ГОЛЛЬ ГЕНЕРАЛА ФРАНЦУЗСЕН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ПУÇЛĂХНЕ ЛАРТНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕ апрелĕн 4-мĕшĕнче ятарласа уйрăм лару туса иртернĕ. Çав ларура де Голль генерала французсен хĕçпăшаллă вăйĕсен пуçлăхне лартмалла тунă

КАРОЛИН УТРАВĔСЕМ ПАТĔНЧИ ÇАПĂÇУСЕМ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). США-н тинĕс министрĕ Нокс пичет представителĕсене çапла каласа кăтартнă: мартăн 30-мĕшĕпе апрелĕн 1-мĕшĕ хушшинче Америкăн операцисем тăвакан вăйĕсем Палау утравне (Каролин утравĕсем) атакăланă. Çавăн чухне Палау, Волеаи тата Яп утравĕсем патĕнче тăнă японецсен судноисене пурне те шыва путарнă е сиенленĕ, анчах мĕн судно пĕтернине тĕрĕсшпе пĕлсе калама çук. Малтанлăха илнĕ хыпарсем тăрăх, Америка авиацийĕн 27 самолет пĕтнĕ.

Лăпкă океанра тата Инçетри Хĕвелтухăç шывĕсенче кĕрешекен американецсен подводнăй лодкисем Японин тата 14 суднине шыва путарнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкарти организацисемпе предприятисен руководителĕсене çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: апрелĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа Атăл урлă автотранспортпа каçма чарнă.

Горкоммунотдел.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00082 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.